Район администрацийĕн кунĕнчен

Хамăршăн хамăрăнах тăрăшмалла

Ял тăрăхĕсенче район администрацийĕн кунĕсем малалла пыраççĕ. Иртнĕ ытлари кун вăл Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче иртрĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ район больницинче, пушар чăçĕнче, Шомикри психоневрологи диспансерĕнче пулчĕ.

Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем вырăнти предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче, ăнăçсăр çемьесенче пулчĕç. РФ Пенси фончĕн тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсем çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕç.

МАЛ ЁМЁТПЕХ ПУРĂНАÇÇĔ

Ку ял тăрăхĕнче предприятисем сахал тесе калас килмест. Вĕсенчен пĕринче – «МирТрубПласт» чикĕллĕ явапăхлă обществăра полиэтиленран тунă шыв, газ кĕртнĕ чухне усă курмалли пăрăхсем туса кăлараççĕ. Вĕсене тумалли гранулăсене Хусантан илсе килеççĕ. Вăл е ку пăрăх нормăпа пăхнинчен кăшт урăхларах пулсан, материала сая ямаççĕ. Кунтах, ватса, çĕнĕрен пăрăх тăваççĕ.

Мăн Сĕнтĕрти тепĕр чикĕллĕ явапăхлă обществăра - «Магма-2» Т-330 трактор валли запас пайĕсем туса кăлараççĕ, юсаççĕ. 14 çынран тăракан коллективра кĕçех тепĕр 5-6 çын валли ĕç тупăнмалла. Вĕсенчен 3-шĕ хĕрăрăмсем пулĕç. Хута ямалли цехра шăпах вĕсен валли пулать ĕç.

– Пире валли газ çитмест. Вутăпа хутса ăшăтатпăр. Газ кĕртмелли ĕçсене пурне те туса çитернĕ, – вуттине кăмакана пăрахнă май каласать А.А. Кукьин.

«Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ явапăхлă обществăра 140 тĕрлĕ продукци кăлараççĕ. Кунти продукцие Мăн Сĕнтĕр райповĕн магазинĕсем сутнипе пĕрлех, Муркаш райповĕпе те ку тĕлĕшпе килĕштерсе ĕçлеççĕ. Çавăн пекех районти тĕп больница та кунтан продукци туянать. Нискасси шкулĕ эрнере пĕр кун кăна мар кунта кăларакан тутлă булкăсене туянать. Районти ытти шкулсенчи ачасем те Мăн Сĕнтĕрсен çимĕçне активме хирĕç мар пулсан, Нискассисенчен тĕслĕх илме пултараççĕ. Анчах та юлашки вăхăтра уйрăм çыннăн «Елена» магазинĕнче Шупашкартан кӳрсе килекен çăкăра йӳнĕрехпе сутма пуçланăранпа çăкăр сахалтарах кайни пăшăрхантарать предприяти ертӳçине Л.Г. Ильгечкина. Ку ыйтупа асăннă суту-илӳ предприяти ертӳçипе пĕр чĕлхе тупасса, эрнере 1-2 кун кунта вырăнта туса кăларнă çăкăра сутма пуçласса шанать Леонид Геннадьевич.

«Сундырь-Хлеб» вара мал ёмётпех пурăнать. Пĕлтĕр кунти пур цехра та çĕнĕ урайсем сарчĕç. Кăçал маччапа стенасене улăштарма пуçласшăн. Республикăра ырă ят çĕнсе илнĕскер, çак чикĕрен пĕрре те чакмасть. Потребкоопераци предприятийĕсем хушшинче ирттернĕ республикăри конкурсра лимонад тăвассипе 1 вырăн, пĕремĕк тăвассипе 2 вырăн çĕнсе илчĕç Сĕнтĕрсем.

«ХАМĂР ÇИНЕ ОТВЕТЛĂХА ИЛМЕЛЛЕХ»

Район администрацийĕн кунне ирттерекенсем вырăнти халăхпа Мăн Сĕнтĕрти Культура çуртĕнче тĕл пулчĕç. Чи малтанах ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.В. Лаптев ял тăрăхĕнче иртнĕ çулта туса ирттернĕ ĕçсем çинчен отчет туса пачĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Иртнĕ çул бюджетăн тупăш тата тăкак пайĕсене те пĕтĕмпех пурнăçланă. Тупăшăн 25 процентне хăйсем ĕçлесе илеççĕ. Налук пухмалли плана 25 процент ирттерсе тултарнă. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи предприятисем ура çинче çирĕп тăни çинчен калать çакă та, çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсем те.

Иртнĕ çул Мăн Сĕнтĕрте 3 урамра пурĕ 1400 метр тăршшĕ шыв пăрăхĕсем хунă, 3 колонка вырнаçтарнă. Çулсене пăхса тăрассине те куçран вĕçертеççĕ: ăçта кирлĕ – унта хăпартаççĕ, вак чул, хăйăр сарса майланисем те пур. 4 масара тирпей-илем кĕртнĕ тата ытти те.

Тумаллисем те сахал мар. Кивелсе кайнă 2 башньăна улăштарасшăн. Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă май мĕн пур палăка юсаса çĕнетесшĕн. Асфальт çул пур ялсенче çӳп-çап пуçтармалли баксем вырнаçтарасшăн. Урамсене электрификацилессипе те малалла ĕçлеççĕ. Мăн Сĕнтĕрти 2 урама, Çĕн Кармăшри 1 урама çутă кĕртессипе проектсем экспертизăра.

Тĕл пулура тухса калаçакансем те пулчĕç. Мăн Сĕнтĕрте тротуар юсасси, пĕвесене пăхса тăрасси, Шоккăнти шыв башни ĕçлеменни тата ытти ыйтусене хускатрĕç. Тавралăха тирпей-илем кĕртесси тавра та çирĕп калаçу пулчĕ. Хупнă «свалкăна» паян та хăшĕсем çӳп-çап тăкни çынсем хăйсене явапсăр тытни çинченех калать пулĕ. Чăннипех те, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов каланă пек, хамăр пурнăç лайăхрах пултăр тесе хамăрăнах тăрăшмалла. Ĕçлеме çĕрсем пур. Ку енĕнпе тĕслĕх илмелли çынсем те пур ку тăрăхра. Толстов, Бархаткин Х(Ф)Х лайăх аталанса пыраççĕ. Шыв ыйтăвĕ пирки те çавнах каламалла. Ял тăрăхĕн бюджечĕн укçинчен çăл ункисене илсе параççĕ, çăлĕсене кам та пулин чавса парасси кĕтни те килĕшӳллĕ мар пулĕ – çакна çынсен хăйсенех тумалла. Хамăр пӳрт çумĕнчи юра та тĕпсакайне шыв ан кĕтĕр тесе аякри «кукка» уçса парасса кĕтнин усси çук пулĕ.

– Хамăр çине ответлăх илмеллех, – терĕ Юрий Александрович. Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне пурнăç çирĕплетсе панине Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕсем ăнланаççĕ пулĕ. Ку енĕпе малашне те ял тăрăхĕн администрацийĕпе пĕр тĕллевпе ĕçлессе шанас килет.

Л. ПАВЛОВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: «Сундырь–Хлебра» кăларнă çăкăр-булкăна туянăр; «МирТрубПластра» пăрăхсем тăваççĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Уяв умĕнхи интервью

Пĕтĕмпех ял çыннисемшĕн

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Пысăк ыйту вăл – район центрĕнче пурăнакансене ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтересси. Ку енĕпе шывпа тивĕçтермелли системăна йĕркелесси пирки 2005 çултах проект хатĕрленĕ пулнă. Халĕ вăл кивелнĕ ĕнтĕ, ăна çĕнетме тивет. Юлашки 20 кунти тĕслĕхсем те çавнах çирĕплетеççĕ. Шыв пăрăхĕсем çурăлса кайнипе çыхăннă тĕслĕхсем 8 пулчĕç. Ку аварисене пурне те пĕтернĕ, паянхи куна шывпа тивĕçтерессипе пăтăрмахсем çук.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисене пурнăçлассине малашне ытларах коммуналлă хуçалăх служби çине хума пăхнă. Шывпа тивĕçтернĕшĕн те, ытти услугăсемшĕн те тӳлемелле пулать. Юнкă, Катькас, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче шывпа тивĕçтерессине «Жилкомсервис» чикĕллĕ явапăхлă общество хăй çине илнĕ.

Çывăх вăхăтрах йăлари хытă каяшсен полигонне хута ярасси енĕпе ĕçлетпĕр. Ялсенчен çӳп-çапа уйрăм вăхăтра турттарма пуçлатпăр, ун пирки ял çыннисене вырăнсенче пĕлтерĕç. Çавна та каласа хăварас пулать. Хальхи вăхăтра кирек епле ĕçе те тӳлевсĕр пурнăçлама май çук. Пĕтĕмпех укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çавна май малтанхи вăхăтра ялсенчен çӳп-çап илсе тухассине бюджет шучĕпе тӳлевсĕр майпа йĕркелеме палăртатпăр пулин те, малашне çакă тӳлевлĕ пулĕ.

Юлашкинчен вара май килнипе усă курса пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсене тепĕр хут хăйсен професси уявĕпе саламлас тетĕп. Сирĕн ĕçĕрсем ăнса пыччăр, çемйĕрсенче ăнланупа килĕшӳ хуçаланччăр, чи кирли вара – пурин те сирĕн яланах сывлăх пултăр.

В. ШАПОШНИКОВ
çырса илнĕ.

Автомобилистсене пĕлме

Кивви вырăнне – çĕннине

Раççей промышленность суту-илĕвĕн министерстви кивĕ автомашинăсене утилизацилессин программине хутшăнакан дилерсемпе утилизаторсен списокне çирĕплетнĕ.

Пирĕн республикăра утилизаци лаптăкĕ «Чувашвтормет» пулĕ. Дилерсен шутне вара республикăри тĕрлĕ маркăллă автомашинăсем сутакан 10 предприятие кĕртнĕ. Дилерсенчен ытларахăшĕ Шупашкар хулинче, вĕсенчен пĕри кăна Çĕнĕ Шупашкар хулинче.

Паллă ĕнтĕ, утилизаци программине хамăр çĕршывăн автопромне аталантарас тĕллевпе йышăннă. Çавăнпа та 50 пин тенкĕне кивĕ автомашинăна паракана хамăр çĕршывра туса кăларнă çĕнĕ автомашинăна туянас пулсан кăна параççĕ. «Иномаркăна» туянма пулать, паллах, анчах Раççейре пуçтарнине. Малтанах çак ĕçе19 региона туса ирттерме пăхнă пулнă. Унта Чăваш Республики кĕмен. Унтан вара çак йышăнăва улшăнусем кĕртнĕ. Халĕ вара çулталăкран кая мар кивĕ автомашинăпа усă куракансем, ытти регионсенчи пекех, утилизаци программине хутшăнма пултараççĕ.

Программа мартăн 8-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Автомашинăна утилизацие парассин пĕтĕмĕшле требованийĕсем çавăн пек: вăл 10 çултан кая мар туса кăларнăскер пулмалла, 3,5 тоннăран ытла туртмалла мар.

Утилизаци схеми çапла: автомашина хуçи кивĕ автомашинăна дилер патне илсе пырать, утилизаци пункчĕн услугисемшĕн тӳлет те доверенноçпа парса хăварать. Енчен те автомашина хăй тĕллĕн çӳреймест пулсан, турттарса пынăшăн тӳлеме тивет. Дилер автомашинăна ГИБДД органĕнче учетран кăларать те утилизаци площадкине илсе пырать. ГИБДД тата утилизаци площадки паллă тунă бланка дилера тавăрса параççĕ. Çавăн хыççăн вара кивĕ автомашина хуçи çĕнĕ автомашинăна йӳнĕрехпе туянма пултарать. Пĕр условие асăнса хăварас пулать – кивĕ автомашина хуçин утилизаци мелĕшĕн (3 пин тенкĕрен ытла мар) тӳлеме тивет.

Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ

Çатракассисен пĕрле тăрăшас кăмăл пур

Иртнĕ юн кун республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов ертсе пыракан ушкăн килчĕ. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене районăн социаллă пурнăçĕпе, экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Унтан, 5 ушкăна пайланса, район администрацийĕн явапăлă ĕçченĕсемпе пĕрле Çатракасси, Чуманкасси ял тăрăхĕсенче, унти предприятисемпе организацисенче, учрежденисенче, Шомикри психоневрологи диспансерĕнче пулчĕç.

Хальхинче пĕрлехи информаци кунĕ Çатракасси ял тăрăхĕнче иртекен район администрацийĕн кунĕпе тĕл килчĕ. Юрий Александрович информаци ушкăнне кĕрекенсемпе чи малтанах «Свобода» хуçалăхăн сысна комплексĕнче пулчĕ. Кунта Эстонирен илсе килнĕ сыснасене ĕрчетеççĕ. Пĕтĕмпе 1600 пуç.

– Эсир çитĕнтернĕ ăратлă сыснасене Тутарстанра, Чулхула облаçĕнче те хапăлласах туянаççĕ, вĕсенчен – ытти регионсем. Ăратлăх ĕçĕнче эсир шанчăклă партнер пулса тăратăр, – терĕ Владимир Карлович комплексăн специалисчĕсемпе тĕл пулнă май.

Н.М. Чаплина зоотехник-селекционер каланă тăрăх, иртнĕ çул кунта 362 ăратлă сысна açине сутнă.

Унтан ку ушкăн Çатракассинчи сĕт-çу ферминче пулчĕ. Очăкассинчи Культура çурчĕн, кунти библиотекăн, ФАП ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕ. Очăкассинче пурăнакансемпе шыв ыйтăвне сӳтсе яврĕç.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи халăхпа тĕл пулу Кашмашри Культура çуртĕнче пулчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.А. Кожевников иртнĕ çул туса ирттернĕ пĕлтерĕшлĕ ĕçсем çинче чарăнчĕ. Çул тăвас, тытса тăрас, шывпа тивĕçтерес, çĕнĕ урамсене çутă кĕртес, ялсене тирпей-илем кĕртес ыйтусем çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Ятманпа Йӳтĕркассинче çăлсене юсама пуçланă, Кашмашпа Çатракассинче пĕрер çăл тунă. Кашмашпа Çĕньял Хуракассинче çулсене вак чул сарса юсанă. 3 урампа çул тума проектсем хатĕрленĕ. Çӳп-çап валли 24 бак туяннă. Çивĕч ыйтăва татса панă– Кашмашри 2 çĕнĕ урама çутă кĕртнĕ. Ку енĕпе ĕçсем малалла пыраççĕ. Çавăн пекех кăçал Хуракасси выççăлккинче кивелсех çитнĕ кĕпере йĕркене кĕртессипе те ĕçлеме палăртаççĕ. Çĕньял Очăкассипе Очăкасси ялĕсенче çул тăвас ыйту тăрать. Ку ял тăрăхĕнче шыв ыйтăвĕ те кун йĕркинчен тухмасть.

Тухса калаçакансен сăмахĕнчен çакă курăнчĕ: ку енче пуçаруллă çынсем те сахал мар, çынсем ĕçлеме те ӳркенмеççĕ.

– Моделлĕ библиотекăна та хамăр ялта кашни килтен укçа-тенкĕ пуçтарсах турăмăр. Çатракасси шкул патĕнчи шурă çурта никĕсне юсаса хăпартсан, çавăнтан япăх мар клуб пулмалла. Пирĕн çынсем ĕçлеме ӳркенмеççĕ, тухатпăр, теççĕ. Кирлехчĕ Çатракассинче клуб, – чунтанах тухаççĕ нумай çул районти ял хуçалăх управленийĕн тĕп агрономĕнче ĕçленĕ, паян тивĕçлĕ канури А.Ф. Анисимован сăмахĕсем.

Ялти пĕвене тасатасси те, хурăн ращи çӳп-çаппа тулса ларни те пăшăрхантарать Александра Федоровнана.

Кашмаш шкул директорне Г.П. Ершована Кашмашра çĕнĕ шкул тăвас ыйту канăç памасть. Ку енĕпе вăл кирлĕ пĕтĕм документа хатĕрлесе çитернине палăртрĕ. Галина Павловнана тавралăха тирпей-илем кĕртесси те хумхантарать.

– Çуркунне, айтăр-ха, ытларах субботниксем ирттерер, – терĕ вăл. Шкул çумне лартса хăварнă йывăçсем патне çĕнĕ урамсенче пурăнакансем çӳп-çап тăкни те, ял çумĕнчи пĕве çӳп-çаппа тулса ларни те канăç памасть ăна.

Урамсене каçхине çутă çутас енĕпе те ыйтусем пулчĕç.

Информаци ушкăнĕн ертӳçи В.К. Тихонов тĕл пулура пĕрлехи информаци кунĕн ыйтăвĕсем çинче – республика çур акине, Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнине епле хатĕрленни, усă курман çĕрсене ĕçе кĕртесси çинче – чарăнчĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче Яракра тата Хорнуйĕнче хăйсен вăйĕпе ял çыннисем культура вучахĕсем туса лартни çинчен каларĕ. Çатракассисен клуб тăвас ыйтăвне вырăнти халăхпа пĕрле татса пама май пуррине палăртрĕ. Кĕскен каласан, ку лав вырăнтан тапранма хатĕр. Юрий Алесандрович çавăн пекех çĕнĕ урамсене электрификацилес, çулсем тăвас ыйтусем çинче чарăнчĕ. Тăван тавралăха тирпей-илем кĕртес ĕç çинче чарăннă май вырăнти пĕвесене уйрăм çынсем арендăна илсе пăхса тăрасси практикăна кĕрсе пыни, хăйсен ĕçне пуçлакансене те паян патшалăх малтанхи ĕçсене туса ирттерме 58 пин тенкĕ ытларах парса пулăшни çинчен каларĕ.

РФ ПФ пирĕн районти управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă май вăрçă ветеранĕсемпе тăлăх арăмсене, тыл ĕçченĕсене пĕр хутчен укçан пулăшу пани çинче чарăнчĕ. Вăрçă участникĕсемпе тăлăх арăмсене 5-шер пин тенкĕ параççĕ, тыл ĕçченĕсене – 1-шер пин тенкĕ. Енчен те тыл ĕçченĕ тăлăх арăм пулсан, ăна 5 пин тенкĕ параççĕ. Çак суммăна апрельте пенсипе пĕрле параççĕ.

Тĕл пулу вĕçĕнче Кашмашри Культура çурчĕн артисчĕсем концертпа савăнтарчĕç. **Л. ТУКТИНА.**

Налук тӳлекенсене пĕлме

Уйрăм çынсем валли

2010 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ 10 сехетрен тытăнса 14 сехетчен «тӳрĕ лини» ирттерет. Ун вăхăтĕнче налук тӳлекен уйрăм çынсем транспорт, çĕр тата пурлăх çине хуракан налуксене тӳлессипе информаци илме пултарĕç.

«Тӳрĕ линин» номерĕсем: 63-2-66 (Муркаш); 8-83547-22-592 (Етĕрне).

«2010 çулхи декларацн кампанийĕ»

2010 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ 10 сехетрен тытăнса 14 сехетчен «2010 çулхи декларацн кампанийĕ» темăпа «тӳрĕ лини» ирттерет.

Уйрăм çынсем тупăшсене декларацилессин, пурлăх тата социаллă тӳлевсем енĕпе çăмăллăхсемпе усă курассин ыйтăвĕсемпе канаш илме «тӳрĕ линин» çак телефонĕсемпе усă курма пултараççĕ: 62-4-52 (Муркаш); 8-83547-24-158 (Етĕрне).